❑ ЧЕКУШКИНА ЕЛЕНА



# ГЕННАДИЙ ЮМАРТ ПОЭЗИЙĔН ХĂЙ ЕВĔРЛĔХĔ

**Аннотаци:** Статьяра Геннадий Юмарт чăваш поэчĕн пултарулăхне витĕм кӳнĕ тĕрĕк тĕнчин илемлĕ хăйне евĕрлĕхне тишкерме палăртнă. Тĕпчевре сăвăçăн чăвашсен мăн аслашшĕсен сăнарне тата вĕсен ĕлĕкхи историйĕпе паттăрĕсене ӳкернĕ поэмисемпе сăввисене пăхса тухнă. Ĕçре Геннадий Юмарт поэзийĕнче сĕм авалхи тĕрĕк халахĕсен илемлĕ йăли-йĕркин паллисем курăннине те калană. Тĕслĕхрен, чăваш несĕлĕсем ваттисенчен пил илнин йăли т.ыт.те.

**Çăлкуç сăмахсем:** Чăваш халăхĕ, тĕрĕксем, хĕвел сăнарĕ, турă сăнарĕ, поэмăсем, сăвăсем, ваттисен пилĕ, Геннадий Юмарт.

**Gennady Yumart'ın Şiirinin Kendine Özgülüğü**

**Özet:** Bu makale Çuvaş şair Gennady Yumart'ın çalışmalarını büyük ölçüde etkileyen Türk dünyasının sanatsal kimliğinin ele alınmasına odaklanmaktadır. Araştırmada şairin, Çuvaşların atalarının tasvirlerini ve onların geçmiş tarihleri ile ünlü kahramanlarını gösteren şiirleri ve manzumeleri incelenmiştir. Çalışmada Gennady Yumart'ın şiirinde, en eski Türk halklarının güzel geleneklerine ait izlerin görüldüğü belirtilmiştir. Örneğin, Çuvaşların cetlerinden ve atalarından dua alması gibi gelenekler incelenmiştir.

**Anahtar Kelimeler:** Çuvaşlar, Türkler, güneş imgesi, Tanrı imgesi, şiirler, manzumeler, ataların duası, Gennady Yumart.

**The Uniqueness Gennady Yumart's Poetry**

**Abstract**: This article focuses on addressing the artistic identity of the Turkish world, which greatly influenced the works of Chuvash poet Gennady Yumart. In the research, the he poet's poetry and poems, which present the depictions of Chuvash people's ancestors, their history and their famous heroes, are examined. In the study, it is stated that the traces of the beautiful traditions of the oldest Turkish peoples are seen in the poetry of Gennady Yumart, For example, the traditions such as Chuvash people's getting prayers from their forefathers and ancestors are examined.

**Keywords**. Chuvash people, Turks, image of sun, image of God, poems, poetry, ancestors' prayer, Gennady Yumart.

Паян, чăваш халăхĕн пуласлăхĕпе унăн тĕлĕнмелле пуян культурин шăпи пирки тĕрлĕрен калаçусем пынă вăхăтра, А.П. Хузангай пĕр статьяра çырнине аса илни питĕ вырăнлă: «Смутное время, которое мы переживаем, заставляет перечитывать «старые книги», они очищают сознание от «ложных и лживых, пустых и выветрившихся слов, формул и понятий» (Хузангай 2003: 211). Чăнах та, темиçе ĕмĕр каяллах çырнă текстсене вуласан тепĕр чух куç уçăлсах кайнăн туйăнать. Калăпăр, акă, тĕрĕк халăхĕн чаплă çар пуçĕ Кўль текĕн вилнĕ ятпа лартнă чул палăк çинчи текстра çапла каланă: «Когда было сотворено вверху голубое небо (кöк тенгри) и внизу бурая земля, между ними были сотворены сыны человеческие, Над сынами человеческими воссели мои предки Бумын-каган и Истеми-каган <…> Небо (Тенгри) и священная Земля-Вода (Çĕр-Шыв) тюрков так сказали: «Да не погибнет народ тюркский, народом пусть останется» (Малов 1951: 36-37). Ку текста 732 çултах хайланă пулнă. VIII ĕмĕртех тĕрĕксен мăн аслашшĕсем халăхăн пуласлăхĕ пирки шухăшласа çапла çырнă, тĕрĕк чĕлхиллĕ йăх пĕтмессе çирĕп шанса тăнă вĕсем. Анчах куратпăр, çак шанăç пушă ĕмĕт çеç мар, вăл тĕрĕк халăхĕ нимрен малтан çўлти Вăя – Турра – хисепе хурса унран пил ыйтни çинче никĕсленнĕскер пулнă. Вара ирĕксĕрех çапла шухăшлас килет: тен, çавна пулах пирĕн халăх тем тĕрлĕ терт-асап витĕр тухса та паянччен сыхланса юлнă.

Атнер Хузангай чăваш халăхĕн культурăри пуянлăхне пĕр ăнлавпа «Пихампар Кĕнеки» тесе палăртать. Критик шучĕпе, çав сăнарлă каланă «Пихампар Кĕнекине» халăхăн историйĕнче паллă йĕр хăварнă пĕтĕм эткерлĕх, е урăхла каласан сăмах вĕççĕн çўрекен тата çырулă культура кĕрет. Акă епле калать вăл кун пирки: «Книга Пигамбара есть мандала, открытая на все стороны света, в ней сходятся векторы силы и нежности, этики и эстетики, жизненной энергии и добра, «девственных действий» всех живших, живущих чувашей и тех, кто будет жить. Туда нисходит Дух (Чăваш Шульăшĕ) и со страниц ее рассеивается в пустотах мира, залетает в души людские, приводит их в трепет, который гармоничен с музыкой сфер» (Хузангай 2003: 121). Паллах, чăваш халăхĕн Пихампар Кĕнекине кĕме тивĕçлĕ XX – XXI ĕмĕрти çыравçăсен хайлавĕсем те сахал мар. Кунта Константин Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин, Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Яккăвĕн, Митта Ваçлейĕн, Александр Артемьевăн, Геннадий Айхин тата ытти нумай поэтсемпе писательсен хайлавĕсене кĕртме пулать. Çавăн пекех XX ĕмĕрти поэтсенчен Пихампар Кĕнекине кĕме тивĕçлисенчен тепри вăл - Геннадий Юмарт сăвăç.

**Геннадий Федорович Юмарт (Трофимов)** 1938 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Кайри Карăкра çуралнă. Вăл вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарта И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пĕлў илнĕ, 1961-1965 çулсенче Самар енчи чăваш шкулĕсенче чăваш тата вырăс чĕлхипе литератури вĕрентнĕ. Каярах Чăваш кĕнеке издательствинче корректорта, редакторта ĕçленĕ. 1970-2000 çулсенче — Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн литература пĕлĕвĕпе фольклористика пайĕн ĕçтешĕ. Вăл тивĕçлĕ канура та тăван халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланса тăчĕ. Шел пулин те, Г.Ф. Юмарт 2020 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлса кайрĕ.

Чылайăшĕ пĕлеççĕ-тĕр, Г.Юмарт чăвашсен авалхи пурнăçне тĕпчесе нумай ĕç тунă. Наукăра шырани-тупни ăна поэзире те çитĕнўсем тума хавхалантарнă теме пулать. XXI ĕмĕр пуçламăшĕнче унăн кĕнеке хыççăн кĕнеке тухрĕ: «Авалхи хавал» (2001), «Халал сăввисем» (2003), «Пушкин чăвашла янăрать» (2004), «Асаттесем» (2006). Ун поэзийĕнчи шыравсене тишкернĕ май çакна асăрхама пулать: Юмарт сăввисем урлă пирĕнпе авалхи чăваш тĕнчи калаçать. Акă, тĕслĕхрен, **«Асаттесем»** поэма-ярăм çўлерех асăннă Кўль текĕн текстĕнчи пекех авалхи йăх-несĕлсен ырă тĕслĕхĕсенчен – Турăран пил ыйтнинчен пуçланать (Юмарт 2006).

Кунсăр пуçне авалхи йăхташăмăрсен ваттисен чунĕсенчен (дух предков) пехил илесси те йăлара пулнă.

«Эй, ватăсем, парсамăр пил, -
Ан сӳнтĕр пирĕн хăтлă кил» (Юмарт 2006:10), -

тет поэт çакна асра тытса. **«Атте-анне», «Пĕрле пурăнар»** сăвăсенче те çак шухăш пытаннă. Çыравçăн çак хăйне евĕрлĕхне И.В. Софронова тĕпчевçĕ çапла ăнлантарать: «Произведение начинается с обращения к Богу / Турă с просьбой благословить лирического героя осуществить задуманное, что соответствует традициям дастана. Для восточного жанра традиционно прославление Бога, своего покровителя, человеческого разума в начале произведения. Лирический герой цикла также просит благословления у духов предков. Проявляется национальное мировоззрение автора» (Софронова 2018: 237). Çапла вара, Г. Юмартăн поэзийĕнче Турра, çӳлти вăйсене аслăласси питĕ пĕлтерĕшлĕ пулăм.

Чăвашсен мăн аслашшĕсен пурнăçĕнче хĕвел сăнарĕ те пысăк вырăн йышăнни пирки эпир хамăрăн тĕпчев ĕçĕсенче палăртнăччĕ (Чекушкина 2004: 7). Хĕвел Туррине е Куар (кăвар) Турра пуç çапас йăла чăваш несĕлĕсем II-III ĕмĕрсенче иран чĕлхиллĕ халăхсемпе юнашар Çурçĕр Кавказ таврашĕнче пурăннă чухнех пуçланнă-мĕн. Хĕвелпе сăмахлас йăла-йĕрке ача-пăча сăмахлăхĕнче те самай курăмлă пулнине палăртмалла. Тĕслĕхрен:

«Хĕвел пăх, хĕвел, пăх!
Ачу шыва кайнă вĕт,
Турчăкапа туртса к(ă)лар,
Çĕнĕ кĕпе тăхăнтарт».

Е тата:

«Хĕвел, тух, хĕвел, тух,
Пылпа кулач çитереп!»

Г.Юмарт поэзийĕнче те хĕвелпе Турă сăнарĕ пĕчĕк вырăн йышăнмаççĕ:

«Туррăмăр, Хĕвел, хапăлласа
Эсĕ çеç илтен кĕллĕмĕре.
Эй, тивлетлĕ Туррăмăр Хĕвел!
Тӳрлĕхлĕ çынна эс аслăлан» (Юмарт 2006: 14).

Чăваш сăмахлăхне витĕр пĕлсе-туйса тăракан сăмахçă пултарулăхĕнче авалхи чăваш тĕнчин çак палли – Хĕвел сăнарĕ - ярт уçăлса каять.

«Эй Хĕвелĕм, тӳрлĕхлĕ хуçам!
Эй тӳрем!Çĕрпе тӳпе патши,
Эс тытса тăратăн çĕршыва,
Ыр вăй-хал пире куллен кӳрен» (Юмарт 2006: 14).

Паллах, хĕвел сăнарне сума суни чăваш халăхĕн кăна мар, чĕлхе тĕнĕпе пурăннă ытти халăхсен культуринче те анлă сарăлнине асăнмалла. Тĕрĕссипе, çут çанталăкпа тачă çыхăнура тăрса аталанакан ача пек таса чунлă халăх хăйсене куллен ăшăтса, пархатар кăтартса пурăнакан хĕвеле Турă вырăнне хунинчен пит тĕлĕнме те кирлех мар-тăр. Г.Н. Волков ăсчах кун пирки çапла

палăртать: «Чуваши говорят: «Дарующая свет всей вселенной Мать света – Солнце…» Настолько очевидно признание чувашами, как и многими народами, великого значения солнца в жизни людей и в самом существовании природы, что они очеловечивали солнце и приписывали ему даже высокие моральные качества» (Хузангай 2003: 24). **«Асаттесен халалĕнче»** çак шухăша çапла палăртать поэт:

«Тĕнче çутимĕр хĕвеле,
Турра сума сăвать чăваш,
Тату пурнать кӳршипеле,
Хăйне сăпай тытать, йăваш» (Юмарт 2006: 137).

Г.Юмарт поэзийĕшĕн авалхи чăвашсенни пекех тĕнчене пĕр Турă тытса тăрать текен шухăш никĕс вырăнĕнче тесе çирĕплетме пулать:

«Турă, тен, пуриншĕн те пĕрре.
Ячĕ тĕрлĕрен-тĕр тĕнчере…»

Г.Юмарт сăвăç кăна мар, куçаруçă та. Вăл чăваш несĕлĕсен пурнăçне тĕпченĕ май питĕ нумай авалхи çыруллă сăмахлăх тексчĕсене чăвашла куçарнă. Тĕслĕхрен, Моисей Каланкатуаци çырнă «Алуанк çĕршывĕн историйĕ» ĕçĕ, Ахмед ибн Фадланăн «Атăлçи Пăлхара çитсе курни» очеркĕ т. ыт. те. Наукăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ çак ĕçсем унăн сăвă хайлас пултарулăхĕ çине те витĕм кӳнĕ паллах. Ахальтен-и **«Асаттесем»** кĕнекене кĕнĕ ярăмсене вуланă май авалхи чăваш историйĕ хронологи йĕркипе куç умне тухать, улăпсем Арамаçи тăвĕ çинче, тĕрĕк йăхĕ Китай тавращĕнче, хуннсен йышĕнче пурăнни, историре палăрнă паттăрсен ячĕсем – Алп-Илитвер, Кăтраха, Алмуш, Авраамий, авалхи хуласем т. ыт. те.

Г.Юмартăн сăвă тĕнчипе паллашнăçемĕн çакна та асăрхатăн – Юмартăн поэзийĕ çивĕч метафорăсемпе йăлтăркка эпитетсенчен тăмасть. Ку вăл пачах урăхла поэзи, кăмăл-сипете тасатакан, ăс-хакăла вăратакан, ăс-тăна пуянлатакан, çылăхлă çĕр çинчи вак-тĕвек шухăшсенчен пăрса темле питĕ çутă, таса Хăват пирки шухăша яракан поэзи. Ăс-хакăлпа мифологи поэзийĕ (духовно-мифологическая поэзия) тесе палăртма пулать унăн сăвă жанрне. Г.Юмарт поэзийĕ - авалхи несĕлсен юрри-сăввинчен тымарланса тухакан, сĕткен илсе тăракан поэзи. **«Пăлхар патши»** ярăма çырма сăвăçа тĕрĕк тата тухăç халăхĕсем хушшинче авалах анлă сарăлнă *Каснă пуç (кисек баш)* мотивĕ хистени те куç кĕрет. Сăвăра Пăлхар патшин пуç шăммийĕ çын чĕлхипе калаçать. Поэт пурнăçпа вилĕм пирки шухăшлакан йĕркесенче авалхи чăвашсен пурнăç философийĕ пытаннă:

«Ӳтĕм çеç мар, нимĕн те
Юлаймарĕ мулăмран.
Пуç хулам ларас тĕлте
Чул та шăмă çеç куран.
Халь мĕнпур иртен-çӳрен
Урипе тапать мана» (Юмарт 2006: 78-79).

Поэт этемĕн çĕр çинчи пурнăçĕн пĕлтерĕшĕ пирки тарăннăн шухăшлать, ку тĕнчене хăналăха кăна килнине самантлăха та манмасăр çынсене сăваплă пурăнма сĕнет. Çак шухăшсенех эпир XI ĕмĕрте пурăннă авалхи тĕрĕк поэчĕ Юсуф Баласагунин «Кутадгу билиг» (Хăтлă пĕлӳ) поэминче те куратпăр:

«Все блага мирские для жизни даны,
А кончится жизнь – и они не нужны.
Богатство ты копишь, твой век суетлив,
Кому их оставишь ты, дух испустив?
Что пользы? Для всех – в лоне смерти приют,
Умрешь – на тебе две холстины навьют!»

(Баласугуни 1990: 4698, 4699)

Паллах, чăваш несĕлĕсен авалхи пурнăçĕ ытти çыравçăсене те шухăшлаттарман мар-ха. Сăмахлăхăн ылтăн çӳпçине е «Пихампар Кĕнекине» К.Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет». Г. Тал-Мăрсан «Силпи-пăлхар пики», Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр», И. Петрова-Нарсăн «Çул юппинче», Юхма Мишшин «Кăвак çĕмрен», Б.Чиндыковăн «Урасмет» т. ыт. те хайлавсем тивĕçлипех кĕрсе юлнине палăртмалла. Асăннă хайлавсем халăх историйĕн уйрăм тапхăрĕсемпе уйрăм çыннисен пурнăçне сăнлаççĕ пулсан Г.Юмартăн поэзийĕнче вара халăхăн вуншар ĕмĕр хушшинчи кун-çулĕ, йăли-йĕрки, вăрçи-харçи, хула тавраш ĕ, ар-паттăрсем т. ыт. те. ярăмланса ӳкерĕннĕ.

Çапла вара, Геннадий Юмарт сăвви-поэмисенче куç умне йăхташăмăрсен сĕм авалхи тĕнчи панорамăллăн тухса тăрать те паянхи вулаканра темле мăнаçлăх çуратать, çак тĕрлĕ пуян ăс-хакăллă халăх Турă пилĕпе малалла та пурăнĕ-ха текен шухăша çирĕпленме май парать. Çакăнта Н.А. Бердяев каланине аса илес килет: «Народ должен быть, должен хранить свой образ, должен развивать свою энергию, должен иметь возможность творить свои ценности» (Бердяев 1918: 107) Пирĕн шутпа, Г.Ф. Юмарт пултарулăхне шăпах чăваш чунне (Чăваш Шульăшне) аталантаракан, халăх сăнне упракан, ăна пурăнма вăй-хăват паракан ăс-хакăл поэзийĕ (*духовная поэзия*) шутне кĕртмелле те.

**Литература**

Баласугуни, Ю. (1990). *Благодатное знание. – М.-Л.*, Сов. Писатель.

Бердяев, Н.А. (1918). *Судьба России. Очерки по психологии войны и национальности*. М., 1918. С.107.

Малов. С.Е. (1951). *Памятники древнетюркской письменности. . М.-Л.*, 1С.36-37.

Софронова, И. (2018). “Образ древнечувашского мира в лиро-эпике Г.Юмарта”. *Проблемы марийской и сравнительной филологии*. Изд-во МарГУ, С. 236-239.

Хузангай, А. (2003). *Тексты, метатексты а путешествия*, Чебоксары. С.211.

Чекушкина, Е. (2004). *Общетюркские художественные традиции в чувашской словесности*: дисс. …к.филол.н. Чебоксары, 185 с.

Чекушкина, Е. (2016). “Образ Улыпа – отголосок древнетюркского мира”. *Чувашский язык и литература: теория и методика. Сборник статей. Отв.ред. А.Д. Ахвандерова*. , С. 198-202.

Юмарт, Г. (2006). *Асаттесем*. Шупашкар, 148 с.